Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ

Аваллăха упракан маттур хĕрарăм

Вера Петровна пир тĕртмелли станок умĕнче.

Асфальт çулпа пырса Зоя пĕлĕшĕмпе шăкăл-шăкăл каласса Муркашри Чапаев урамĕнчи 11-мĕш çурт патне çывхаратпăр. Хуçалăх тирпейлĕх çинче тытăнса тăни урамранах курăнать.

– Çакăнта çуралса ўснĕ эпĕ. Хамăн анне пекех çак кил-çуртра хĕрарăмăн аваллăн пыракан алă ĕçне – тĕрĕ тĕрлессине – аннерен вĕреннĕ. Паян çак илемлĕ ĕçе алла илнĕшĕн пĕртте ўкĕнместĕп. Пушă вăхăтра тĕрĕ тĕрлесе чунăма уçатăп, – кил хушши алăкне уçса малалла иртме чĕнсе каласрĕ паян Муркаш райповĕн «Центральный» магазин заведующийĕнче тимлекен З. Малыгина. Кил хуçине кил хушшинче шыранă май куçăмсем çуртсем таврашĕнче ўсекен йышлă та илемлĕ чечексем çинчен каймарĕç. Илеме кашнийĕнех курас килет те çав, анчах ăна тăвасси пирĕнтен нумайăшĕшĕн чылай чух «йывăр ĕç» пулса тăрать.

Алăк сассине илтсех-тăр пахчаран çум йăтнă асанне кĕчĕ. Хĕрне курнипе ватă çыннăн куçĕсенче савăнăç выляма пуçларĕ. Пирĕн тĕллеве – пир тĕртнипе интересленнине пĕлсен, вăл пушшех канăçне çухатрĕ.

Вера Петровна Пикузова Кашмашра хресчен çемйинче çуралса ўснĕ.

«1936-мĕш çулхисем эпир», – тет çав вăхăта уйрăммăн палăртса ĕç ветеранĕ. Çемьери 4 ача (Леонид, Илья, Вера, Валерий) ашшĕне Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çухатнăран пурнăç çулĕ çине амăшĕн пулăшăвĕпе тата хăйсен тăрăшулăхĕпе тухса пынă: çĕр ĕçĕнчен пăрăнман, килти ĕçрен ютшăнман. Вăрçă ачисем аслисенчен юлмасăр çурлапа тырă вырнă, кĕлте йăтнă-çапнă, çăпата калăплама вĕреннĕ тата...

– Ĕçрен ютшăнман, кашни пушă вăхăтрах – уйрăмах хĕл кунĕсенче – аннепе пĕрле пир тĕртме лараттăм. Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн çак çăмăл мар ĕçе алла илтĕм. Вĕрентĕм те паян та ăна пăрахаймастăп. Пир тĕртмелли станок умне ларсанах чун уçăлса каять, ывăнни иртет, çулсем хыçа юлнине пăхмасăрах çамрăклăх туйăмĕ вăй илет. Савăнсах ĕçлетĕп вара, вăхăт иртни те сисĕнмест, – пит-куçран савăнăç шевли ямасăр кăмăллăн каласать Вера Петровна.

Çапла каласнă май пўрте иртсе ман умри асанне хăйĕн пĕчĕк пўлĕмĕнче ларакан пир тĕртмелли станок умне майлашса кĕрсе ларчĕ. Паян – этем космоса вĕçнĕ вăхăтра, кашни ĕçрех компьютерпа усă курнă чух – ку станокпа ĕçлесси чи ансат пулăм темелле, анчах... Вера Петровна пир тĕртессипе пуçламăш хусканусене тусанах, пĕр-икĕ çип каларсанах кунта та хăйне евĕр компьютер иккенни куç умне тухрĕ. Пысăк тимлĕх кирлĕ иккен. Вăл вара Вера Петровнан пур. Унпа усă курса çак асанне метрпа мар, километрпа пир тĕртнĕ хăйĕн пурнăçĕнче. Пир тĕртнĕ те ачисене япăх тумтирпе çўретмен. Ял-йыш валли те, тăвансене те сахал мар пирпе тивĕçтернĕ çак ĕçчен чăваш хĕрарăмĕ. Çавсемшĕн тав сăмахĕ сахал илтнĕ-и вăл! Паян Вера Петровнана тăван ялта çеç мар, кўршĕрисенче те, республикăмăр тĕп хулинче те аван пĕлеççĕ. Ку вăл паян, пурнăç тата ĕç опычĕпе пуйса çитсен. Унччен вара...

– Пĕрлешўллĕ хуçалăхсен малтанхи утăмĕсем пирĕн ачалăхпа тўр килчĕç. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи те – пирĕн кун-çулăн уйрăлми пайĕ. Вăрçă чарăннă хыççăн йывăрлăхсене куççуль юхтарса çĕнсе халăх хуçалăхне ура çине тăратни, яла халиччен курман техника килме пуçлани, унăн пулăшăвĕпе тырă акни-вырни, курăк çулни т. ыт. те – йăлтах пирĕн истори, пирĕн çамрăклăх, – тарăн шухăшлăн каласать Вера Петровна ратнялла (4 ура лаппипе) тата ахаль (2 ура лаппипе) тĕртнĕ пирсене арчаран кăларса ман ума сарса хунă май. – Паянхи пурнăçра вăл пурте пур. Пирĕн ачалăхра çукки ытларахчĕ. Çуккинчен пур тăвассишĕнех Кашмашри 7 çул вĕренмелли шкул хыççăн пĕлĕве малалла тăсаймарăм. Кунсерен «Свобода» колхозăн уй-хир бригадинче ĕçлеттĕмĕр. Алăпа утă çулаттăмăр, тырă выраттăмăр, тислĕк кăлараттăмăр, çĕр улми лартаттăмăр, пĕвесем пĕвелеттĕмĕр. Çапла ĕçленипех ун чухнехи ял урамĕсем тирпейлĕрехчĕ, халăх кăмăлĕ те уçăрахчĕ.

Хĕр çулне çитсен, ĕçченскерне, Муркашра пурăннă тата колхозри уй-хир бригадирĕ пулнă Николай Михайлович Пикузов куç хывать. 1957 çулта юратнă çамрăксем пĕр çемье çавăраççĕ, икĕ хĕр – Нинăпа Зоя – çуратса ўстереççĕ. Амăшĕн ал ĕç пултарулăхне кура вĕсем те паян тĕрĕ ăстисем. «Хамăр ăратă марккине сўнме памастпăр», – теççĕ вĕсем паян амăшĕн чун арчипе мухтанса. Качча килсен те Вера ал ĕçне сўнме памасть. Мăшăрĕпе пĕрле Социализмла Ĕç Геройĕ Е. Андреев ертсе пынă колхозра уй-хир бригадинче вăй хурать. Анчах ĕçрен пушшансах пир тĕртме кĕрсе ларать, алă ĕçĕнчи хăйĕн ăсталăхне малалла туптать.

Аваллăха упраса хăварнă маттур хĕрарăмран паян вĕренекенсем, унăн ĕçĕ урлă çамрăксене иртнĕ ĕмĕрĕн историне, чăваш хĕрарăмĕн авалтан пыракан пултарулăхне вĕрентекенсем йышлă. Çавăнпах Вера Петровна Пикузована паян пĕрре те килте лăпкă ларма памаççĕ. Вăл тăтăшах хулари музейсен хăни, районти краеведени музейĕнче курма пыракансене сурпан сырăнтарса тата çăпата сырса кăтартаканни.

Ĕçчен чăваш хĕрарăмĕ пир тĕртнипе çеç лăпланса ларматсть. Унăн килти хушма хуçалăхĕ те – ялта пуяннисенчен пĕри. 8 мăнуклă, 3 прамăнуклă асанне-кукамай Игорь мăнукĕн çемйипе пурăнса килти хушма хуçалăха та

Пир тĕртекен чăваш хĕрарăмĕ тĕрĕре те ăста.

пуян тытать. Паян вĕсен кил хушшийĕнче ĕни те, пăрăвĕ те пур, витере икĕ сысна, чăххичĕппи те йышлă. Пахчана тухсан вара улмуççисен сулхăнĕнче йышлă вĕлле ларнине курсан татах тĕлĕнетĕн: ăçтан-ха кун чухлĕ пултарулăх?

– Пурнăçа юратни ĕçлеме хавхалантарать, – йăл кулă парнелерĕ вĕлле патĕнчен иртнĕ май тĕрĕ ăсти, пир тĕртекен маçтăр Вера Петровна. Çак вăхăтра вăл тĕрлесе тĕртнĕ пире унăн хĕрĕ Зоя анлă сарса кăтартрĕ. Ку вăл пир тĕртекенĕн пултарулăхĕ чи çўллĕ шайра пуллнине кăтартать.

Вера Петровнана вăрăм ĕмĕр, ăнăçусем сунса тата пуçра çуралнă ырă шухăшсене йĕркелесе урамалла тухрăм.

Анатолий БЕЛОВ.

Автор сăн ўкерчĕкĕсем.

Шăмат кунхи рубрика

Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

Паянхи рубрикăна Муркаш район прокурорĕн пулăшаканĕ Юрий Мефодьевич СЕМЕНОВ ертсе пырать.

Çул-йĕр паллине пăхăнмасан

Кăçалхи çу уйăхĕнче Катькас тĕлĕнче федераллă автоçул çинче çуран çўрекенсене каçса çўремелли вырăна кăтартакан паллă тĕлĕнче çул урлă каçакана КамАЗ автомашина çапса кайрĕ. Водителе мĕнле айăпларĕçши?

Авари пулнă вырăнта пулнисем.

Чăнах та кăçалхи çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче 10-мĕш сехетре «Мускав-Хусан-Ĕпхў» федераллă автоçул çинче кунашкал инкек пулса иртнĕ. П.Г. Мавлеткулов водителе çийĕнчех тытса чарнă. Пулса иртнĕ инкек тĕлĕшпе тивĕçлĕ следстви ĕçĕсем пурнăçланă хыççăн ку ĕçе çурла уйăхĕн 13-мĕшĕнче Муркаш район сучĕ пăхса тухрĕ. Çул-йĕр правилипе килĕшўллĕн водитель «Пешеходный переход» паллă тĕлĕнче çул урлă каçакан çынна «Катькас» чарăнуран «Солнечный» коллективлă сада каçма май паман. Вăлах çак паллă тĕлĕнче хăвăртлăха чакарман, çул çинчи лару-тăрăва курса автомашинăна чарман. Çакнашкал лару-тăрура çуран çўрекене сывлăх енчен сиен кўнĕшĕн çурла уйăхĕн 13-мĕшĕнче иртнĕ Муркаш район сучĕ Чулхулара пурăнакан П.Г. Мавлеткулова РФ Уголовнăй Кодексĕн 264-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступление тунă тесе приговор кăларчĕ. Унпа килĕшўллĕн водителе пĕр çуллăха ирĕкрен хăтарчĕç тата çулталăк çурăлăха водитель прависĕр хăварчĕç. РФ УК 73 статйипе ирĕкрен хăтарнине пĕр çулталăк условнăй тесе йышăнчĕç тата çак вăхăта тĕрĕслев вăхăчĕ çирĕплетрĕç.

Телефон туртса илнĕшĕн

Паян кĕсье телефонĕсемпе усă куракансем йышлă пирки вĕсене пĕрисем теприсенчен вăйпа туртса илнĕ тĕслĕхсем те пур тенине илтетпĕр. Саккун умĕнче ответ тытакансем пур-и?

Редакцие шăнкăравланинчен.

Паллах пур. Пĕр тĕслĕх. Кăçалхи çу уйăхĕн 21-мĕшĕнче çĕрле 23-мĕш сехетре Çатракасси ял тăрăхĕнчи Çатракассинчи вăтам шкул тĕлĕнче «симĕс çĕлен хистенипе» Чулхулара çуралса ўснĕ тата унтах регистрацире тăракан, Çĕньял Хуракассинче пурăнакан Евгений Николаевич Васильев çул çитмен çамрăкран вăйпа усă курса кĕсье телефонне туртса илет. Анчах ку хутĕнче те тĕрĕслĕх çиеле тухать. Çурла уйăхĕн 7-мĕшĕнче пулса иртнĕ район сучĕ Чулхула «паттăрне» РФ УК 161-мĕш статйин 2-мĕш пайĕн «г» пунктĕнче пăхнă преступление тунă тесе йышăнчĕ, штраф тўлеттермесĕр пĕрлехи режимлă колонире 2 çуллăха ирĕкрен хăтарма приговор кăларчĕ.

Суя укçа мыскари

Телевизорпа тата радиопа суя укçасемпе усă куракансене тытнисем пирки час-часах пĕлтереççĕ. Кунашкал тĕслĕхсем районта пур-и?

А. ПЛАТОНОВА.

Кăçалхи пуш уйăхĕн 19-мĕшĕнче Шупашкарти пĕр перекет банкĕнче Муркаш район çыннине çĕтĕлнĕ укçана улăштарнă чух вăл суя укçа иккенне пĕлсе банк хуралĕ тытса чарать. Суя укçа «ĕçĕ» çакна кăтартса пачĕ. Пуш уйăхĕн 9-мĕшĕнче Мăн Тутаркасра пурăнакан М.И. Адамов хăйĕн килĕнче упраннă тăватă пая пайланнă çĕтĕк 1000 тенкĕлĕх «ăста хатĕрленĕ» суя укçана асăрхать. «Илемлĕ» япалапа ма усă курас мар-ха? Çапла вара пуш уйăхĕн 19-мĕшĕнче çĕтĕк уçан вăрттăнлăхĕсене каламасăр хăйĕн пĕлĕшне Н. Кириллова ăна банкра улăштарса килме хулана парса ярать. Анчах суя укçа чейне ĕçесси пулмарĕ И. Адамовăн. Çĕртме уйăхĕн 2-мĕшĕнче пулса иртнĕ район сучĕ ăна РФ УК 30 статйин 3-мĕш пайĕнче, 186 статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступленисене тунă тесе тата РФ УК 73 статйипе килĕшсе икĕ çуллăха условнăй майпа ирĕкрен хăтарма приговор кăларчĕ.

Вăя ниçта чикеймесен

Çу пуçламăшĕнче пĕр арçын çар комиссариачĕ тĕлĕнче çăмăл автомашина капотне çапса ватнине асăрхарăмăр. Кайран ку ĕçпе милицисем те ĕçлени хăлхана кĕчĕ. Мĕн пулса пĕтрĕ-ши?

А. ПАВЛОВА.

Кĕскен каласан, ку хутĕнче те «симĕс çĕлен» пулăшмасăр йĕрке пăсăлман. Çар комиссариачĕ умĕнче тăракан В. Ердуковăн ВАЗ-21140 автомашинин капотне ўсĕр пуçпа Кашмашра пурăнакан П. А. Толстов чышкăпа çапса ватни пулнă. Çак хулиганла ĕçе 2009 çулхи августăн 14-мĕшĕнче район сучĕ пăхса тухрĕ. Приговор – йĕрке пăсакана пĕр çуллăха условнăй майпа ирĕкрен хăтарчĕç тата сиен кўнĕшĕн унран 5495 тенкĕ шыраса илмелле турĕç.

Çава çинчи йĕркене пăснăшăн

Вандализм тĕслĕхĕсем районта пур-и? Тата вĕсемшĕн мĕнле айăплаççĕ?

Б. СЮКТЕРКОВ, И. ПАВЛОВ.

Районти йĕркелĕхе пăхса тăнă вăхăтра, питĕ сайра пулсан та, вандализм тĕслĕхĕсем тĕл пулаççĕ. Саккун вĕсемшĕн те явап тыттарма пăхать. Кунашкал тĕслĕх кăçалхи çу уйăхĕн вĕçĕнче Çĕньял Муркаш çывăхĕнчи çава çинче пулса иртнĕ. Хăйсем хушшинчи килĕшўллĕ мар хуттăнусене пула çу уйăхĕн 29-мĕшĕнче 1938 çулта çуралнă Р.И. Игнатьева С.С. Языкова ывăлĕн вилтăприйĕ çинчи палăка тата чечексем лартма хунă бордюрсене çĕмĕрет, унта лартнă чечексене кăкласа ывăтать. Общество моралĕсене тата чун-сипет ыйтăвĕсене пăснăшăн июлĕн 21-мĕшĕнче иртнĕ район сучĕ Р.И. Игнатьевана 2500 тенкĕ штраф тўлеттерме приговор кăларчĕ.

Вăрманçă сăмах илет

Тимлĕхе çухатас марччĕ

Вăхăт кĕр еннелле кайрĕ пулин те, çу кунĕсем хыçала юлма васкамаççĕ-ха. Шăрăх тăракан çанталăк кашнин умнех çивĕч ыйтусем кăларса тăратать. Уйрăм хăрушлăх вăл – пушар. Çакна асра тытса паян кашнийĕнех тимлĕхе вуншар хут ўстермелле, асăрханулăх пирки юлташсене те, ытти çынсене те асăрхаттарсах тăмалла. Ахальлĕн... хĕл умĕн...

Манăн паянхи сăмах вăрманти пушар хăрушсăрлăхĕ пирки. Шăрăх çанталăка пула курăк типсе кайрĕ, йывăç çулçисем тăкăнма пуçларĕç, вăрманта выртакан вутă-шанкă та типĕ. Çак вăхăтра ял-хула çыннисем вăрмана кăмпана, мăйăра е çут çанталăк сулхăнĕнче кану ирттерме йышлăн тухма пуçларĕç. Вĕсем вăрманта пирус туртни, канăва йĕркеленĕ май вучах чĕртни – час-час пулакан йĕркесĕрлĕх. Вăл тăван тавралăха вараланипе пĕрлех «хĕрлĕ автана» çул уçакан сăлтав пулни пирки те вăрмана тухаканăн манас марччĕ. Аттеасаттесем лартса ўстернĕ вăрман пирĕн ачасемпе мăнуксемшĕн те упранса юлтăрччĕ.

Уйрăм сăмах вăрмана тĕрлĕ ăпăр-тапăр пырса тăкни пирки. Çак йĕркесĕрлĕх кăшт вăхăтранах хамăра пырса тивет: кăмпана е мăйăра кайсан вăрманпа иртмелле мар пулса ларать.

Çакнах йывăç касакансем пирки те каламалла. Ирĕк илмесĕр йывăç касакансем, сире çак ĕçшĕн 5 пин тенкĕрен пуçласа штраф тата вăрмана пысăкрах сăтăр кўнĕшĕн ирĕкрен хăтарма пултарни пирки те манас марччĕ. Çакă çывăх вăхăтрах вăрманçăсен кунĕ çитес умĕн уйрăмах актуаллă янăрать. Вăрманçăсен кунĕ пĕрлехи уяв пулнине манас марччĕ. «Пўрт ту, ача ўстер, йывăç ларт», – тесе вĕрентнĕ пире аслисем. Вăрманти тирпейлĕхе пăхăнни çак виçĕ халала пурнăçлани те пулать.

В. НИКОЛАЕВ,
Ильинка лесничествин участок мастерĕ.

Вулакан пултарулăхĕ

Ăçта эсĕ, аннем?

Ют çĕршыва лекнĕ ачасен шăпи пирки...
«Ют чун – чĕмсĕр чун». (Халăх сăмахлăхĕ).

Пурнăçăн кустăрми хăварчĕ
Куççульлĕ йĕр чĕрем çине.
Ман çиллĕм тăвăнса пăтранчĕ –
Çухатрăм эп анне йĕрне.
Ăçта-ха эс кайса çухалтăн,
Мана хăвартăн тăлăха?
Сан куçна эп тулли пулмарăм,
Пач ют çынна куçран сăнап.
Епле хитреччĕ аннен пичĕ,
Шыратчĕç кăкăр аллăмсем,
Епле пылакчĕ унăн сĕчĕ...
Çухалчĕ халь таçта аннем.
Эп халь инçет океан урлă
Тупайрăм иккĕмĕш çемье,
Атте-анне ман питĕ муллă,
Вĕсемшĕн эп чĕр пукане.
Эп ним çуккишĕн кулянмастăп,
Эпĕ ыйтсан – ман пурте пур.
Анчах сана эп манаймастăп,
Мĕншĕн тесен эсĕ вĕт пур.
Килсем, ларсам эс çума-çумăн,
Сана ыталăп эп мăйран.
Океан шавлĕ шурă хумлăн
Эс ачашла питрен, пуçран.
Епле хитре анне сăнарĕ,
Епле пылакчĕ чĕптĕм сĕт...
Анчах таçта кайса çухалчĕ,
Çăвар йўççийĕ халь çак сĕт.

Василий МАКСИМОВ.